26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 1 ШАМАТКУН 1(6496) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. КАЛИНИН юлташ 1944-мĕш Çĕнĕ Çул çитнĕ ятпа каланă сăмах



Хаклă юлташсем!

Совет Союзĕн гражданĕсем!

Рабочисемпе работницăсем! Колхозниксемпе колхозницăсем! Совет интеллигенцийĕ! Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем! Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче пурăнакан ыскем! Сире Çĕнĕ Çул çитнĕ ятпа сывлăх сунса саламлатăп!

Юлташсем, виççĕмĕш çул ĕнтĕ пирĕн çĕршыв çĕнĕ çула нимĕç фашизмне хирĕç хаяр кĕрешÿ пынă вăхăтра кĕтсе илет. Пирĕн халăхăн пĕтĕм интересĕсемпе шухăш-кăмăлĕсем вăрçăпа çыхăнса тăраççĕ, халăхăн пĕтĕм вăй-хăвачĕ патриотла пĕр аслă тĕллев патнелле туртăнаççĕ — ылханлă тăшмана Совет Союзĕн таккинчĕн хăваласа кăларма, нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме.

Паллă ĕнтĕ, паян, çĕнĕ çул кунĕ çитнĕ майпа кашни совет гражданинĕ хăйне çакăн пек ыйту парать: нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăрçăра иртнĕ çулталăк хушшинче, чăн малтан, эпир вăрçă фронтĕнче мĕн туса ирттертĕмĕр? Тÿрех каламалла — нумай ĕç тунă. Чăн та, çакă вăл эпир ĕмĕтленнинчен — совет территорине фашистла вăрă-хурахсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерме ĕмĕтленнинчен сахалтарах; анчах çапах та пирĕн вăрçăри çитĕнÿсем çав тери пысăк.

Иртнĕ çулталăк вăрçă ĕçĕсен тĕпренех пирĕн майлă улшăннă çулталăк пулнĕ. 1943 çулăн пуçламăшĕнче пирĕн çарсем Сталинград патĕнче историлле çĕнтерÿ туниле, çуллахи каллех пара — Курскпа Белгород патĕнче пысăк çĕнтерÿ тунине паллă пулса тăчĕ.

Хĕрлĕ Çар наступлени операцисем тума пынине пула, нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ территорин виççĕ пайĕнчен икĕ пайне тăшманран тасатнă. Хĕрлĕ Çар Краснодар, Ставрополь крайĕсене, Калмыкипе Кабардино-Балкарие, Воронеж, Курск, Ростов, Смоленск, Сталинград облаçĕсене нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларчĕ. Днепр шывĕн сулахай çыранĕнчи Украинăн, унăн пуян хисеплĕ халăхĕсем тата промышленноçпа тĕлĕшне паха вырăн йышăнса тăракан Сталино, Ворошиловград, Харьков, Полтава, Сумы, Чернигов облаçĕсене пĕрле, нимĕç пусмăрĕнчен хăтарнă. Днепропетровскпа Запорожье облаçĕсене, вĕсен область центрĕсемпе — Днепропетровскпа Запорожье хулисемпе, нимĕçсенчен тасатнă. Çавăн пекех тата Киев, Кировоград, Житомир тата Николаев облаçĕсен пĕр пайне ирĕке кăларнă.

Белоруссири Гомель, Могилев, Витебск, Полесье облаçĕсен 36 районне ытла тата область центрне — Гомель хулине нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă.

Çакă вăл Германи çарĕ совет фронтĕнче 1943 çулта пысăк поражени тÿсни çинчен калать.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулталăкра тунă пысăк çитĕнÿсенчен пĕри вăл, паллах, Днепр шывĕ урлă каçни, Киев хулине ирĕке кăларни, Днепр шывĕн сылтăм енчи Украинăра плацдарм туса, ăна аслăлатни пулса тăрать. Нимĕçсем Днепршăн, ăна оборонăн питех те паха рубежĕ вырăнне хурса, уйрăмах хытă тăраççĕ, анчах Хĕрлĕ Çар нимĕçсене çав позицисенчен хĕсе-хĕсе кăларать, нимĕçсен оборонине инçете сăмăлланса кĕре-кĕре кайса, вĕсене совет çĕршывĕн хĕвеланăç чиккисем патнелле ывăнма пĕлмесĕр хăвалать.

Хĕрлĕ Çар фашистла захватчиксене хăватлăн пыра-пыра çапни нимĕç командованийĕн пуçĕсене кăна пар, çавăн пекех тата гитлеровецсен ертсе пыракан мĕнпур шайккин пуçĕсене те ерипен уралтарса пырать. Нимĕçсем Урал çинчен, Баку нефчĕ çинчен манчĕç, Мускава çарпа илессин тути-масине çухатрĕç, тата уйрăмах çакна палăртмалла, нимĕçсем, хăйсен чи лайăх стратегийĕ тесе, «майлашуллăн каялла чакнине», «фронт линине кĕскетнине» шутла пуçларĕç. Нимĕçсем хăйсен вăрçăри планĕсем путланса ларнине çавăн пек ăнлантарса пани кулăшла; анчах Германи командованийĕн ку ĕçе лайăхрах ăнлантарса памалли майсем çук пулас. Халăх каларĕшле, çукшăн суд та çук. Нимĕçсем «майлашуллăн каялла чакни» пирки каласан, Хĕрлĕ Çар çакна лайăх пĕлет: совет çĕрĕн пĕр метрне те нимĕç хăй ирĕкĕпе пăрахса хăвармасть, нимĕçе совет территорийĕнчен вăйлă çапăçусенче çапа-çапа кăларма лекет, çакна пирĕн Хĕрлĕ Çар кунран-кун туса пырать те ĕнтĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çара шанчăклăн пулăшаканĕсем пирĕн мухтавлă партизансемпе партизанкăсем пулса тăраççĕ. Вĕсем, тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырса, аслă ĕç тăваççĕ.

Тĕрĕслĕх çакна калама хушать: Хĕрлĕ Çара фронтра çитĕнÿсем тума совет çыннисем, фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсемпе рудниксенче, транспортпа ялхуçалăхĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлесе, нумай енчен пулăшса тăраççĕ. Рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем кăçалхи çул татах та ытларах ăнăçусем туса ĕçлерĕç, хамăрăн Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăчĕç. Совет çыннисем вăй хурса, хастаррăн ĕçленĕшĕн, патриотла пысăк тивĕçлĕхе чыслăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн чи лайăх награда пани вăл — Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Совет тылĕн ĕçне пысăка хурса хаклани пулать.

Кăçалхи çул Хĕрлĕ Çар нимĕçсене пыра-пыра çапнипе пĕрлех пирĕн союзниксем те нимĕçсен фашистла çарĕсене хирĕç тăтăшах кĕрешсе пычĕç. Англипе Америка çарĕсем нимĕçсене Çурçĕр Африкăран, Сицилирен, Сардинирен, Корсикăран хăваласа кăларчĕç. Халĕ кĕрешÿ Кăнтарти Италие куçрĕ, унта союзниксен çарĕсем Итали столици — Рим патнелле пĕр пăркаланмасăр куçса пыраççĕ. Англипе Америка авиацийĕ питех те ăнăçлăн ĕçлерĕ, Германин вăрçăпа промышленность объекчĕсене аркатса пычĕ.

Германин Европăри чи вăйлă союзникĕ — Италия вăрçăра паранчĕ, Итали халăхĕ вара нимĕçсене хирĕç вăйлăнрах та вăйлăнрах кĕрешме тытăнать.

Нимĕç фашизмне хирĕç пĕрле тăрса кĕрешни союзниксене политика тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрикпе ытларах туслашасси патне илсе пычĕ.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Англин тата Совет Союзĕн ют çĕр-шыв ĕçĕсен министрĕсен çак çулхи октябрĕн вĕçĕнче Мускавра пулса иртнĕ конференцийĕ союзниксене пĕр-пĕринпе ĕçлĕн, тата таччăнрах пĕтĕçме май пачĕ, союзлă çĕршывсен руководителĕсене тĕл-пулма çул уçса пачĕ.

Ноябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 1-мĕшне çитиччен Тегеранра виçĕ союзлă держава руководителĕсен — СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Сталин юлташăн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕн Рузвельт господинăн, Великобритани Премьер-министрĕн Черчилль господинăн конференцийĕ пулса иртрĕ. Çав канашлу тĕнчери виçĕ аслă державăн Тегеранри конференцийĕ ячĕпе историе кĕрсе юлчĕ.

Чăн та ĕçтĕ, Тегеранри конференци пирĕн вăхăтри çав тери аслă событи — нимĕç агрессорĕпе кĕрешес ĕçри историлле тапхăр пулса тăрать. Нимĕçсем ирĕклĕхе юратакан халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрма хăтланнисем пурте пĕтсе ларчĕç. Виçĕ аслă держава руководителĕсем вăрçăпа мирĕн тĕллевĕсем тĕлĕшпе пĕтĕмпех калаçса татăлчĕç. Оккупациленĕ çĕршывсенче нимĕçсен пусмăрĕнче асапланса пурăнакан халăх массисен ĕмĕтне пурнăçлас тĕлĕшпе калаçса татăлчĕç. Нумаях пулмасть Совет Союзĕпе Чехословаки республики пĕр-пĕринпе туслăн пурăнасси, пĕр пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăнхи вăхăтра пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договор та нимĕç агрессине хирĕç кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хăвăрах куратăр, юлташсем, пирĕн 1943 çулта тунă çитĕнÿсем пите пысăк. Анчах та тăшмана пĕтĕмпех çĕктермешкĕн пирĕн пурин те фронтра та, тылра та, хамăр çулпуç каланине пурнăçласа пырса, хамăрăн мĕнпур вăя, хамăрăн пĕтĕм ирĕке çав ĕçе тумашкăн памалла.

Юлташсем! Совет Союзĕн гражданĕсемпе гражданкăсем! Боецсемпе командирсем тата политработниксем! Совет Правительстви тата пирĕн партин Центральный Комитечĕ хушнипе Сире Çĕнĕ Çул кунĕ çитнĕ ятпа саламлатăп.

Юлташсем! Паян Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем Житомир хулине тытса илнĕ.

Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар! Вăл, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, 1944 çулта фашистла захватчиксене пĕтермеллех пырса çапĕ, Совет Союзĕн территорине çав ирсĕрсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерĕ.

Çĕнĕ Çул ячĕпе ырă сунатăп, юлташсем!

Гомельти ĕççыннисен митингĕ

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Гомель хулинче митинг пулса иртнĕ, унта хулари çынсем тата çывăхри колхозсенчен пынă колхозниксем пулнă. Трибуна çинче облаçрипе хулари совет, парти тата общество организацийĕсен руководителĕсем тата Белоруссия фрончĕн командованийĕн представителĕсем пулнă.

Митингра генерал-лейтенант Телегин, ВКП(б) Гомель обкомĕн секретарĕ Жиженков юлташ, партизансен отрячĕсен Гомельти соединенийĕн штабĕн начальникĕ Барыкин юлташ тата ыттисем те сăмах тухса каланă.

Митингра пулнисем çав тери хавасланса Верховный Главнокомандующине—Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа салам янă.

Кунсăр пуçне Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетне тата Белоруссия фрончĕн командующине — арми генералне Рокоссовскине салам янă. (ТАСС).

1944 çул тăван çĕршыва ылханлă тăшманран тасатса çитермелли çул пултăр

Паян, 1944 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра каçхи сменăра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем радио тăрăх ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне тата Совет Союзĕн çĕнĕ гимне итлерĕç. Çав вăхăтрах пур цехсенче те кĕске митингсем пулса иртрĕç.

Ступин юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ М. И. Калинин юлташăн сăмахне итленĕ хыççăн çĕнĕ çулта татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулса, хăй çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕ. Стахановка Мочалова юлташ, çĕнĕ çулта кашни уйăхрах ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултарма пулса, çапла каларĕ:

—Ылханлă тăшманăн пĕтес сехечĕ çитсе пырать. 1944 çул хамăрăн тăван çĕршыва ылханлă тăшманран пĕтĕмпех тасатса çитермелли çул пулса тăрĕ. Эпир хамăрăн вăя шеллемесĕр ĕçлесе фронта кирлĕ таран продукци парса тăрăпăр.

Кĕтнĕ ĕмĕт çитĕ

КАНАШ, январĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян, çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ май, вагонсем юсакан завод коллективĕ иртнĕ кунсенчен хастаррăнрах ĕçлени палăрать.

Акă радио тăрăх ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ сăмах калама тытăнчĕ. Каçхи сменăра ĕçлекенсем, Михаил Иванович Калининăн ăшă сăмахĕсене тимлĕн итленĕ хыççăн, 1944 çулта пĕтĕм вăй-хала çĕнтерÿ тунă çĕре пама пулчĕç. Вагонсем юсакан комплекс коллективĕ декабрь уйăхĕнче те аван ĕçлерĕ. Çĕнĕ çулта вăл задание икĕ хут ирттерсе тултарма пулчĕ. Смагин, Мирошниченко, Сергеева стахановецсем ĕç нормине яланах икĕ-виçĕ хут ытларах тултарса ĕçлеме сăмах пачĕç.

Я. ТКАЧЕНКО,
Вагонсем юсакан комплекс начальникĕ.

Çĕнĕ çул—çĕнтерÿ çулĕ пулать

Этем кĕтме юратать. Чуралăхра-и, сăванса пурăнать-и, — пур чухне те этем хăйĕн шухăшĕсем пурнăçа кĕрессине кĕтет. Совет çыннисем халĕ нимĕçсен вăрă-хурахĕсене çĕмĕрсе тăкас сехете кĕтеççĕ. Кĕтеççĕ çеç мар, çав савăнăçлă сехете çывхартассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Паян çĕнĕ çул — 1944 çул пуçланнă кун М. И. Калинин юлташ кăçалхи çулталăк пирĕн совет çĕршывĕнчен нимĕç захватчикĕсене тĕп-тĕрĕпех тасатмалли çулталăк пулса тăрать, тесе каларĕ.

Хĕрÿллĕ кĕрешÿ çулталăкĕ пулĕ пирĕншĕн 1944 çул. Эпир çак çулта хамăрăн пĕтĕм вăй-хăвата, мĕнпур пĕлÿлĕхе çĕнтерÿ сехетне çывхартас ĕçе парăпăр.

Эпĕ пĕр госпитале ертсе пыратăп. Хамăн пĕтĕм пĕлÿпе пултарулăхăма аманнă боецсемпе командирсене хăвăртрах сыватса çитерсе строя тăварма паратăп.

Çĕнĕ çул фашистла вăрă-хурахсемшĕн пĕтмелли çул, пирĕн совет çĕршывĕшĕн çĕнтерÿ çулĕ пулса тăрĕ.

А. И. АНАНЬЕВ.
РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ, орденоносец.

ТĂШМАНА АРКАТСА ТĂКМА

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ хăйĕн çĕнĕ çул ячĕпе тухса каланă сăмахĕнче 1944 çул Совет çĕршывне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатмалли çул пулса тăрĕ, терĕ.

Эпĕ, хамăрăн колхозниксемпе колхозницăсен ятĕнчен, М. И. Калинин юлташăн чĕрене савăнтаракан сăмахне ответлесе, çапла каласшăн:

Тăван çĕршыва ылханлă нимĕç захватчикĕсенчен тасатакан мухтавлă Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пырăпăр. Çĕршыв тата фронт ыйтнисене пурне те парăпăр. Çак тÿрĕ сăмахсене пурнăçлас ĕмĕтпе çуракине пур енчен те тивĕçлипе хатерленсе кĕтсе илсе, колхоз уйхирĕнче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе кашни гектартан вăтамран 100-шер пăтран кая мар тĕштырă туса илĕпĕр.

А. ВАСЯНИН.
Вăрнар районĕнчи Кольцовка ялĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕпе Белоруссия ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Советне

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халах Комиссарĕсен Совечĕ Белоруссин Советлă Социализмлă Республикине тунăранпа 25 çул тултарнă кун Белоруссин Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисемпе колхозниксене тата интеллигенцине тăванла хĕрÿллĕн саламлаççĕ.

25 çул каярах Белоруссия ĕççыннийĕсем, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, белорусс халăхĕсене пусмăрлакансен влаçне сирпĕтсе антарса, хăйсен влаçне — Совет влаçне туса хучĕç.

Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче Совет Белоруссийĕ чаплă çула утса тухрĕ. 1918—1920 çулсенче нимĕç тата шурă-поляк оккупанчĕсемпе хаяррăн кĕрешсе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, белорусс халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе хăварчĕ. Аслă вырăс халăхĕпе тăванла пĕтĕçсе тăрса, Белоруссия ССР Союзĕнчи халăхсем пулăшнипе, экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен малта тăракан çĕршыв пулса тăчĕ. Белоруссия çĕрĕ çинче темиçе çĕр çĕнĕ предприяти туса лартнă, промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене тунă, хăватлă электростанцисем туса лартнă. Колхоз стройĕ Белоруссия хресченĕсене пуян та культурăллă пурнăç кÿчĕ. Белоруссин нацилле культури нихçан пулман пек ÿссе чечекленчĕ. Нумай йышлă шкулсемпе аслă шкулсем, театрсем, клубсем, кино белорусс халăхĕн культурăллă шайне çÿле çĕклерĕç. Белорусс çĕрĕсем пĕрлĕхлĕ Белоруссия государствине пĕтĕçсе пĕрлешрĕç.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Совет Союзне вăрă-хурахла тапăнни белорусс халăхĕн мирлĕ строительство ĕçне пăсрĕ. Тăшман пырса çапнине Белоруссия республикин малтанхисенчен пĕрин тÿссе ирттерме лекрĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем белоруссене пинĕ-пинĕпе вĕлереççĕ, арçынсемпе хĕрарăмсене, çамрăксене нимĕç чурисем пулма хăваласа каяççĕ, Белоруссин пуянлăхĕсене çаратаççĕ, белорусс халăхĕн ĕмĕрхи культурине тăпăлтараççĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Белоруссин авалхи хулисене — Минска, Гомеле, Могилева, Витебска, Гроднăна, Барановичине, Белостока, Бреста тата ытти нумайĕшĕсене чул ишĕлчĕкĕсем туса хăварнă. Вĕсем белорусс ялĕсене пинĕ-пинĕпе çаратса, аркатса пĕтернĕ. Анчах гитлеровецсем çав тери тискер ĕçсемпе те белоруссен кĕрешÿри хăватне хавшатма пултараймарĕç. Белорусс халăхĕ фашистла варварсене хирĕç ывăнма пĕлмесĕр кĕрешет. Тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ Белоруссия территорийĕ çинче нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пĕтĕм халăхăн партизанла вăрçи сарăлса кайрĕ.

Совет Белоруссийĕнчи ĕççыннисем! Пирĕн çĕнтерÿ кунĕ çывхарса килет. Белоруссия фрончĕн, Балтика çывăхĕнчи 1-мĕш фронтăн тата Хĕвеланăç фрончĕн çарĕсем Белоруссия территорийĕ çине кĕчĕç, Гомель облаçне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех, Полесье, Витебск, Могилев облаçĕсен чылай пысăк пайне ирĕке кăларчĕç. Хĕрлĕ Çар мĕнпур Совет Белоруссине тăшманран пĕтĕмĕшпех тасатса çитерес, белорусс халăхне нимĕç чуралăхĕнчен ирĕке кăларас вăхăт инçе мар ĕнтĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Коммиссарĕсен Совечĕ çакна çирĕп шанса тăраççĕ: нимĕçсем аркатнă Белоруссия хуçалăхне белорусс халăхĕ, хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр ĕçлесе, хăвăрт юсаса ура çине тăратĕ, социализмлă промышленноçпа колхоз стройне çĕнĕрен чĕртсе вăй кĕртĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна шанаççĕ: Белоруссири совет патриочĕсем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле, Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртĕç, ылханлă нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хамăр çĕнтерессишĕн малашне те хăюллăн кĕрешсе пырĕç.

Сывă пултăр Белоруссин Советлă Социализмлă Республики!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛАХ КОМИССАРЕСЕН СОВЕЧĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 30-мĕшĕнче ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, КАЗАТИН хулипе питĕ кирлĕ чугун çул узелне, ВОЛОДАРСК-ВОЛЫНСКИЙ хулине, ЧЕРВОНОАРМЕЙСК хулине, Житомир облаçĕнчи ЛУГИНЫ тата РУЖИН ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăнса илнĕ, çав шутра—БОЛСУНЫ, ДАВИДКИ, УШОМИР, ГУТА МОШКОВКА, КРАЕВЩИНА, СУХОВОЛЯ, ЗУБРИНКА, ДАВИДОВКА, ГРУШКИ, НОВОПОЛЬ, КЛИТИЩЕ, ИВАНКОВ, ВИЛЬСК, ЗОРОКОВ, ВЫСОКО-УКРАИНСКОЕ, ТРОКОВИЧИ, ГОРОДИЩЕ, ЛЕЩИН, БОЛЬШИЕ МОШКОВЦЫ, ЧЕРВОННОЕ, ЧЕХИ, СИНГАЕВКА, ГЛУХОВЦЫ, ПЛЯХОВА, БЕЛИЛОВКА, БАЛАМУТОВКА, МОЛЧАНОВКА, БЕРЕЗЯНКА, САМ-ГОРОДОК, РУДА, ДРОЗДЫ, СИДОРЫ, УСТИНОВКА ятлă пысăк пунктсене.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ЗАПОРОЖЬЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра— Днепропетровск облаçĕнчи ТОМАКОВКА ятлă район центрне, ЧУМАКИ, КИТАЙГОРОДКА, ПРЕОБРАЖЕНКА, ШИРОКОЕ, МИХАЙЛОВКА, ПАВЛОВКА, МАРЬЕВКА, БЕЛЕНЬКОЕ ятлă пысăк ялсене тата КАНЦЕРОВКА, КОЛХОЗНАЯ, 2-МĔШ ДНЕПРОСТРОЙ ятлă чугун çул станцийĕсене.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 128 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

ДЕКАБРĔН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 31-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, 60 ял ытла тытса илнĕ, вĕсем хушшинче —АСТРИЛОВО, АЛЯБЛЕВО, МИШОВО, БАЛАКИРЕВА, МОСЕЕВО, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, ПОГРЕБИЩЕ, ГОРОДИЩЕ, ЩЕРБАКИ, ДЕМЕШКИНО, КОПАЧЕВО ятлă ялсем.

ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, тăшмана хăйĕн оборонин вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктĕнчен хăваласа кăларнă тата ВИТЕБСКПА ОРША хушшинчи шоссе çулне татса пăрахнă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, хăюллăн маневр туса тата татăклăн штурмласа, Украинăри область центрне — ЖИТОМИР хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 150 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра — Винница облаçĕнчи район центрне — ПОГРЕБИЩЕ хулине, ЛУГИНКИ, КРАСНОСТАВЬЕ, КОЛЦКИЕ, ОСТАПЫ, РАДГОЩА, БОНДАРЕВКА, УЩИЦА, СУШКИ, СТАРАЯ БУДА, ВАЦЛАВПОЛЬ, КОЛОДИЕВКА, ВЫШПОЛЬ, ВЕРЕСЫ, ПЕСКИ, ВЕРТОКИЕВКА, КОДНЯ, СКАКОВКА, БОЛЬШИЕ НИЗГУРЦЫ, ЖУРБИНЦЫ, НЕМИРИНЦЫ, СТАРОСТИНЦЫ, НОВОФАСТОВ, ШАЛИЕВКА, ШАМРАЕВКА, ПОЛОГИ, ХРОСТЯНСКАЯ, НОВОСЕЛИЦА, СТЕПАНОВКА ятлă пысăк ялсене тата ЛУГИНЫ, ЕМЕЛЬЯНОВКА, ПРЯЖЕВО, КОДНЯ, МАХАРИН-РАСТОВИЦА, ЗАРУДИНЦЫ, РЖЕВУССКАЯ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăннă.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ЗАПОРОЖЬЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, çав шутра—АЛЕКСАНДРОВКА, КРАСНЫЙ, КАТЕЩИНО, ВЛАДИМИРСКИЙ, МИРОЛЮБОВКА, ЖМЕРИНО ятлă ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 65 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшра çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 само[illegible]

Ӳкерчĕк çинче: Пирĕн земляк гварди подполковникĕ **И. Т. Трофимов**. Отечественнăй аслă вăрçăра нимĕç захватчикĕсемпе паттăррăн çапăçнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата 2-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕпе наградăланă.

ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ĂНĂÇЛĂН ПУРНĂÇЛАРĔÇ

ÇĔМĔРЛЕ. Декабрĕн 30-мĕшĕ. тĕлне «Большевик» завод çулталăкри производство планне ытлашшипех пурнăçланă. Рудень юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановецсем Денисов, Никифоров, Сараськин юлташсем декабрь уйăхĕнчи программăна 140 процент тултарчĕç. Николаев юлташ ертсе пыракан цех çулталăкри плана 5 кун малтан пурнăçларĕ.

* * *

КУСЛАВККА. Комбинат коллективĕ 1943 çулхи производство программине декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 136 процент пурнăçларĕ. Крючков, Яворский, Пушкин, Ольша юлташсем ертсе пыракан цехсем, рационализациллĕ сĕнӳсене пурнăça кĕртсе, ĕç тухăçлăхне пĕлтĕрхинчен икĕ виçĕ хут ытларах ӳстерчĕç. Паллă рационализаторсем Левицкий, Ульянов юлташсем пана рационализациллĕ сĕнӳсем продукцин хăйне ларакан хакне темиçе пин тенкĕлĕх чакарма майсем туса пачĕç.

* * *

КАНАШ. «Авангард» артель декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 108 процент пурнăçларĕ. Çĕвĕ çĕлекен тата тир-сăран тăвакан цехсем декабрь уйăхĕнчи плана вунă кун малтан пурнăçларĕç.

Артель коллективĕ çĕнĕ çул тĕлне планран иртерсе 400.000 тенкĕлĕх продукци парассишĕн кĕрешет.

Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан артель те 1943 çулхи плана срокчен тултарнă, 1944 çулхи плана 20 процента ытлашшипе пурнăçланă.

Шкул ачисем хăйсен каникулне мĕнле ирттерĕççĕ

Январĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче шкул ачисен хĕллехи каникулĕ пулать. ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕ шкул ачисен каникулне ирттерме план тунă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче пионерсен суртĕнче бал-маскарад пулчĕ. Январĕн 1-мĕшĕпе 4-мĕшĕ хушшинче ачасен елки пулать.

Январĕн 2-мĕшĕнче Чăвашсен академи театрĕнче ачасен утренникĕ, Пионерсен çуртĕнче ачасем Отечественнăй аслă вăрçă участникĕсемпе тĕл пулаççĕ. Çав кунах йĕлтĕрпе ярăнас тĕлĕшпе шкул ачисен ăмăртăвĕ пулса иртет.

Январĕн 3-мĕшĕнче Пионерсен çуртĕнче хулари шкул ачисем чăваш писателĕсемпе тĕл пулаççĕ. Кăнтăрла хоккей вăййине ăмăрту пулса иртет.

Январĕн 4-мĕшĕнче академи театрĕнче ачасем валли «Слуга двух господ» пьесăна лартса параççĕ. Пионерсен çуртĕнче Отечественнăй вăрçăра техника мĕнле вырăн йышăнни çинчен лекци пулать.

Январĕн 5-мĕшĕнче кино-фестиваль пуçланать. Вăл январĕн 8-мĕшĕччен пырать. Çав кунах Пионерсен çуртĕнче шахматпа шашка турнирĕ тата хулара йĕлтĕр кроссĕ пулса иртет.

Январĕн 6-мĕшĕнче литература утренникĕ пулать. Унта Гайдар писателĕн творчестви çинчен сӳтсе явасçĕ.

Январĕн 7-мĕшĕнче шкул ачисем Пионерсен çуртĕнче Отечественнăй аслă вăрçă участникĕсемпе тĕл пулаççĕ. Çав кунах художествăллă пултарулăх кружокĕсен членĕсем артистсемпе тĕл пулса калаçаççĕ.

Январĕн 8-мĕшĕнче Чăвашсен академи театрĕнче «Ревизор» пьесăна лартса параççĕ. Унсăр пуçне çавăн ачасем вĕренекен шкулсенчи хоккей командисен ăмăртăвĕ пулса иртет.

Январĕн 9-мĕшĕнче ачасем валли филармони икĕ концерт парать.

Январĕн 10-мĕшĕнче театрта фронтовиксен ачисем валли «Ревизор» пьесăна лартса параççĕ.

Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсем

Николай Офицеров

Пĕр ирхине виçĕ тус—ватă слесарь Николай Иванович Офицеров, çамрăк слесарь Евгений Мищенко тата рабочи Каганер пĕр-пĕринпе тĕл пулсанах ответлă заказа хăвăртрах пурнăçа кĕртесси çинчен канашлама тытăннă.

Вăл заказ — прессформа. Ăна инструментальнăй цех коллективĕн тумалла. Тăхăр бригада ĕçленĕ прессформа тунă çĕрте. Çапах та ĕç ăнман. Ĕçе васкатмалли çĕнĕ майсем тупмалла пулнă.

— Тăватпăр, — тенĕ Николай Иванович, кăштах шутласан,—тăватпăр, анчах çывăрас пулмасть.

Ватă слесарĕн тусĕсем, çак шухăшпа килĕшнине пĕлтерсе, пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ те, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулнă. Виçĕ талăк пынă хĕрӳллĕ ĕç. Виçĕ талăк иртсен, ирхине прессформа хатĕр пулнă. Хĕрӳллĕ ĕçре туслашнă юлташсем, прессформăна техника контроль комиссийĕ йышăнса хыççăн çеç савăнăçлăн сывлăшласа, килĕсене саланнă.

Çавăн пек хĕрӳллĕ кунсемпе савăнăçлă сехетсем Николай Иванович пурнăçĕнче нумай пулнă. Производствăра ĕçлеме тытăннăранпа вăл ирĕклĕ ĕçĕн тивлетне ытларах та ытларах туйса пырать. Украинăри пĕр завода ĕçлеме кĕнĕ чухне унăн нимĕнле професси те пулман. Анчах унăн ĕçлев, вĕренӳ прависем пулнă. Çав правăсем ăна кĕске вăхăтрах пысăк квалификаци илме май панă.

Вунвиçĕ çул ĕçлет ĕнтĕ Николай Иванович производствăра. Вунă çул хушшинче вăл хăйĕн вăйĕпе пĕлӳлĕхне социализмăн илемлĕ çуртне тунă çĕре панă. Çултан çул чечекленнĕ аслă Совет Союзĕ. Ӳснĕ çĕнĕ илемлĕ хуласемпе пысăк гигантсем, юмахри пек ешернĕ колхоз хирĕсем. Çавăнта Николай Иванович хăйĕн ĕçне те курнă. Вăл ударник, унтан стахановец пулнă. Стахановла ĕç ăна пуян та культурăллă пурнăç панă.

Илемлĕ те телейлĕ пирĕн пурнăç. Ăна эпир хамăрăн юнпа тара юхтарса турăмăр. Тĕнчене вăтам ĕмĕрсем патне тавăрма шутланă фашистсем пирĕн телейлĕ пурнăçа хылса çатма пикенчĕç. Фашизм пирĕн ирĕклĕ çĕршыва тапăнчĕ. Çĕçĕпе, пăявпа пĕтерме ăмсанчĕ вăл пирĕн ирĕклĕхпе телее. Ĕç тухмарĕ фашистла вăрă-хурахсен. Фашизма хирĕç кĕрешме совет çĕршывĕ пĕтĕм хăвачĕпе çĕкленчĕ.

Йывăр та хăрушăччĕ вăрçăн малтанхи кунĕсенче. Вăл йывăрлăхсемпе хăрушлăха Николай Иванович Офицеров хăй тӳссе ирттернĕ, хăй куçĕпе курнă.

... Фашистла вăрă-хурахсем урса кайсах хĕвелтухăçнелле шунă. Вĕсем, никама тата нимĕнле пуянлăха шеллемесĕр, Николай Иванович ĕçлекен завод вырнаçнă хула çине вутлă çăмăр тăкма пуçланă. Завод пуянлăхне нимĕçсенчен сыхласа хăвармалла пулнă. Ирнĕ-каçне пĕлмесĕр ĕçленĕ рабочисем. Ирнĕ-каçне пăхмасăр ĕçленĕ Николай Иванович та. Вĕсем хăйсен заводне Чăваш республикипе куçарса килнĕ.

Унтанпа икĕ çул иртрĕ. Халĕ Николай Иванович хăйĕн вăй-хăватне ирсĕр тăшмана çĕнтерес сехете çывхартма парать.

... Хĕллехи лăпкă ирхине шуçăм килнĕ вăхăтра Николай Иванович çутă та аслă цеха пырса çитрĕ. Ĕç пуçланман-ха. Ĕç тумтирĕсене тăхăннă хыççăнах вăл инструментсемпе материалсем мĕнле выртнине пăхса тухрĕ. Çав самантра ун патне çамрăк ача пырса тăчĕ. Вăл—унăн ывăлĕ, Виталий Офицеров.

— Паян эсĕ çак детальсене тăватăн,—каласа пама тытăнчĕ Николай Иванович, хăшпĕр детальсене ывăлĕ умне иле-иле хурса.

Ĕç пуçланни çинчен пĕлтерекен сигнал янраса кайрĕ. Çав самантрах ашшĕпе ывăлĕ хĕрӳ ĕçе тытăнчĕç. Çĕнĕ те çĕнĕ инструментсем тăваççĕ вĕсем. Вăл инструментсемпе заводри рабочисем çĕнтерӳ хĕçпăшалне туптаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Николай Иванович Офицеров хăйĕн ĕçне ялан лайăх тума тăрăшать. Никам та пăшăрханма ан пултăртăр унăн ĕçĕ пирки!

Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче те Николай Ивановичпа унăн ывăлĕ çур сехет кăна ирттерчĕç. Апат çиме панă тепĕр çур сехетĕнче вĕсем çĕршыва кирлĕ инструментсем турĕç. Вĕсен примерĕпе цехри ытти рабочисем те кану вăхăчĕ пĕтиччен чылай малтан ĕçе тытăнчĕç.

Ĕç пĕтсен, ашшĕпе ывăлĕ ыран мĕн тăвасси çинчен канашласа, кирлĕ материалсемпе инструментсене хатĕрлесе хучĕç. Унтан вара ĕç итогĕсене шутларĕç.

Начар мар ĕçленĕ вĕсем паян. 1943 çулăн юлашки кунĕнче Николай Иванович Офицеров юлташ виçĕ норма ытла тултарчĕ, унăн ывăлĕ Виталий Офицеров та нормăна иртерсе пурнăçларĕ. Иртнĕ çулталăкăн кашни кунĕнче çавăн пек ĕçленĕ вĕсем. Ахальтен мар Николай Иванович Офицеров пĕр çул хушшинче пилĕк çулхи нормăна ятлăн тултарнă. Пилĕк çыншăн ĕçленĕ вăл, фронта кайнă пилĕк çыннăн ĕçне тунă вăл иртнĕ çулталăкра. Унăн ывăлĕ Виталий Офицеров ашшĕ вĕрентнипе иртнĕ çулталăк хушшинче квалификаци туяннă. Çĕнĕ çулта вăл çĕнĕ квалификаципе ĕçлесе çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕ.

Начар мар ĕçленĕ Офицеровăн ĕçри тусĕсем те. Евгений Мищенко юлташ пилĕк çулхи нормăна, Евгений Димитренко юлташ тăватă çулхи нормăна, Королев юлташ виçĕ çул çурăри нормăна тултарнă. Вĕсен примерĕ цех коллективне хаваслантарать. Начар мар ĕçлерĕ инструментальнăй цехăн пĕтĕм коллективĕ те. Унăн аллинче заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

Паян çĕнĕ çул кунĕнче Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ хăйĕн иртнĕ çулхи ĕçĕн итогĕсемпе тивĕçлипе мухтанать. Иртнĕ çулта вăл Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне çичĕ уйăх хушши хăйĕн аллинче тытса тăнă. Çав пысăк наградăна завод коллективĕ халĕ те хăйĕн аллинче çирĕппĕн тытса тăрать.

Паян çĕнĕ çул ячĕпе Совет çĕршывĕ хăйĕн мухтавлă патриочĕсене ырлăхпа сывлăх сунса саламлать. Йышăнăр тивĕçлĕ мухтава!

М. ТИТОВ.

Доярка Кульпина

Элĕк районĕнчи «Çĕнĕ çул» колхозăн ĕне ферминче дояркăра ĕçлет вăл.

... Ĕнесем ырхан пулнă, вĕсем сĕт сахал панă. Фермăра йĕрке пулман, ĕне пăхакансем выльăх апачĕсене тирпейсĕр тыткаланă.

Фермăри çитменлĕхсене пĕтерес тесе, Кульпина юлташ тимлĕн ĕçлене, ăна кура ыттисем те хастарлăн ĕçлеме тытăннă.

Çăва тухас умĕн ĕнесем пурте тенĕ пекех пăруланă. Евдокия Кульпина пăхакан 8 ĕне пурте мăнтăр та сывă пулнă. Вĕсенчен илнĕ пăрусем лайăх çитĕннĕ. Пĕр пăрăвĕ уйăх хушшинчех 22,5 килограмм чухлĕ хутшăннă.

Çав вăхăтрах вăл сĕт суса илессине те ӳстерсе пынă. Март уйăхĕнче 1.211 литр, апрельте—1.279 литр, май уйăхĕнче—1.638 литр сĕт суса илнĕ пулсан, июнь уйăхĕнче вара 1.929 литр сĕт суса илнĕ. Çапла вара, 10 уйăх хушшинче хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 11.246 литр сĕт илсе, районри дояркăсем хушшинчи ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вăтамран илсен, вăл кăçал кашни фуражнăй ĕнерен 1.400 литра ытлашши сĕт суса илнĕ.

Кульпина юлташ тăрăшса ĕçленипе ферма ĕçĕ лайăхланса, çĕнелсе пычĕ. 1943 çулта сĕт-çу ферминчен колхоз нихăçан çулхинчен те ытларах тупăш илчĕ. Колхозăн кăçал государствăна 3.747 литр сĕт памалла пулнă пулсан, декабрь уйăхĕ тĕлне 7.393 литр панă.

Евдокия Кульпина ĕнесене юратса пăхнине фермăна кĕрсенех курма пулать. Фермăра тап-таса, ăшă, ĕнесем яланах тутă. Халĕ ĕнесем пăрулама пуçларĕç. Доярка Кульпина вĕсенчен каçхине те уйăрălмасть. Вăл хăш ĕне хăçан пăруласси пĕлсе, вĕсене çирĕп сăнаса тăрать.

Ку таранччен вăл пăхакан 4 ĕне пăруланă. Пăрушĕсене ăшă та çутă пӳртре усрать, лайăх тăрантарать. Вĕсенчен иккĕшĕ (ноябрь уйăхĕнче пăруланăскерсем) уйăх хушшинче 18,5 килограмм хутшăнчĕç.

Евдокия Кульпина сĕт-çу фермипче кăçалхипе вуннăмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Çак хушăра вăл чылай опыт туяннă. Унăн пархатарлă ĕçне темиçе хутчен те паллă тунă. 1939 çулта вăл Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче медаль илнĕ.

Кульпина юлташ çитес çул татах та пысăкрах çитĕнӳ тăвассишĕн, кашни ĕнерен 1.500-шер литр сĕт суса илессишĕн кĕрешет.

Х. ЛИСИН.

Манăн тусcем

Çулла, пĕр вăхăт оборонăра тăнă чух, эпир хамăр чăрри чăвашсен — боецсемпе офицерсен канашлăвне туса ирттертĕмĕр. Çавăн чух пĕр-пĕринпе лайăх кăна паллашса туслашнă хыççăн, эпир хамăр хушăра яланах тачă çыхăну тытрăмăр, хамăран ĕçсем çинчен пĕр-пĕрне пĕлтерсех тăтăмăр.

Августра наступлени пуçланчĕ. Нимĕçсен темиçе уйăх хушши тунă укреплениййĕсене çĕмĕрсе, пирĕн подразделенисем малалла ыткăнчĕç. Унтан вара эпир, нимĕçсем пĕрмай хирĕç тăнине çĕмĕрсе, çĕршер километр малалла кайрăмăр, темĕн чухлĕ ялсене, вуншар пин совет çыннисене ирĕке кăлартăмăр.

Çак çапăçусенче пирĕн землякĕсем—чăваш халăхĕн ывăлĕсем — яланхи пекех хăюллă, паттăр пулчĕç, тăшмана хирĕç нимрен хăрамасăр, хастаррăн çапăçнăшăн татах чаплă наградăсем илчĕç.

Вĕсем пурте—çамрăк, пурте чăваш комсомолĕн ретĕнче ӳснĕскерсем. Акă, «Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çырура» асăннă çамрăк офицерăн—капитан Илья Павловăн кăкрине, малтанах илнĕ «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕсĕр пуçне, халĕ Отечественнăй вăрçăн I-мĕш степеньлĕ орденĕ илемлетрĕ. Вăл çак хăватлă наступлени вăхăтĕнче пĕрмай подразделенисен боевой ретĕсенче пулса, вĕсене питĕ ăнăçлăн ертсе пынă, ял хыççăн ял ирĕке кăларнă. Ăна амантнă, анчах вăл стройран тухман, çаплах çапăçнă. Çапăçусенче пысăк мастерлăх кăтартнăшăн, ăна халь майор званине пама çырса янă. Хăй вăл пĕтĕмпе те 21-мĕш çул çине çеç пуснă—çав тери çамрăк!

Ефрейтор Калмыкова хĕллехи çапăçусенчи ĕçсемшĕн «За боевые заслуги» медаль панăччĕ. Темиçе кун каялла эп ăна нимĕçсене халь çеç хăваласа кăларнă ялта тĕл пултăм. Сылтăм кăкăрта—«Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ йăлтăртатать.

— Ку мĕншĕн тата?—тесе ыйтрăм.

— Разведкăшăн, — терĕ.

Вăл, малтан минер пулнăскер, халь сапер-разведчиксен отделенийĕн командирĕ иккен. Нимĕçсем чакма тытăнсан, ялсене пехотăран малтан пырса кĕрсе, çулсене, çуртсене минăсемпе «сюрпризсенчен» тасатса пырать. Пĕр ăрне хушшинче нимĕçсем пире сиен кӳрес тесе лартса хăварнă 500 мина ытла тупса кăларнă вăл. Çав хушăрах, тарса ĕлкĕреймен икĕ фашиста тыткăна илнĕ.

Унтан вăл мана тепĕр чăваш — рядовой сапер Смольков çинчен каласа пачĕ. Унăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ тата «За отвагу» медаль пурччĕ. Пĕр пысăк шыв урлă кĕпер хывнă чух вăл калама çук паттăррăн ĕçленĕ. Нимĕçсем ку вырăна пĕрмай артиллери кăлечĕсем тунă, çӳлтен бомбăсем тăкнă, анчах Смольков хăйĕн отделенийĕпе çаплах ĕçленĕ, кĕпере часрах туса пĕтерме тăрăшнă. Çавăнтах пуçне хунă вара вăл.

— Командир ăна «Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степеньлĕ» орденне нама çырса янă,—терĕ Калмыков. — Орденĕ çемьи патне каять ĕнтĕ...

Çав кунах старши лейтенант Косолапова тĕл пулса калаçрăм. Вăл—Етĕрне хулинчен. Икĕ награда унăн. Хăй—батальонри комсорг. Тăшмана пысăк шывăн хĕвеланăç енчи çыранĕнчен çапса кăларнă чух, çĕрле вăл пĕр ушкăн боецсене ертсе, пĕрене-сенчен çыхкаласа тунă сулăпа пуринчен малтан ишсе каçнă. Çавăнтах вара çапăçăва кĕрсе кайнă.

Дивизи хаçатĕнче юлашки вăхăтра ытти чăваш боецĕсемпе офицерĕсене те ырлакан статьясем пĕрре кăна мар тухрĕç. Медицина службин старши лейтенанчĕ М. Григорьев (Шăхасан районĕсем) чи вĕри çапăçусем вăхăтĕнче аманнă боецсене нумай çăлса хăварнă. Çамрăк красноармеец Н. Михайлов (Шăмăршă районĕсем) хăйсен командирĕ çумнех пырса ӳкнĕ нимĕçсен гранатине, вăл ĕнтĕ çурăлас умĕн чашкăрма пуçланă пулин те, алла тытса нимĕçсем еннелле каялла пенĕ, çапла майпа командирăн пурнăçне çăлнă. Связист-артиллерист Мошляков (Канаш районĕсем) татăлнă провода, тăшманăн пульлисемпе снарячĕсем çине пăхмасăрах, тӳрлетсе çӳренĕ.

Çавăн пек çапăçаççĕ пирĕн чаçри чăваш çамрăкĕсем. Тăван чăваш халăхĕ хăйĕн çырăвĕнче хушнисене вĕсем тĕп-тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраççĕ!

Старши лейтенант **Л. АГАКОВ.**
Действующи Арми.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Ӳкерчĕк çинче: Шупашкар районĕнчи Шăмăшри тулли мар вăтам шкулта ирхи апат тăваççĕ. Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Сталинграда пулăшма

Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ Сталинградри „Красный Октябрь" металлурги заводне пулăшма ĕçрен пушă вăхăтра 300 тенкел, 50 тумбочка, ачасем валли 50 кровать туса пама йышăннă. Çав япаласене тума тытăннă та ĕнтĕ. Вĕсемсĕр пуçне илемлĕ литература кĕнекисем 300 пухса параççĕ.

Вĕллерен икĕ пăт çурă пыл

Елчĕк районĕнчи „Звезда" колхоз утарĕнче 39 вĕлле пур. Кăçал, вчеловод Иван Пупин юлташ тăрăшса ĕçленипе, кашни вĕллерен икĕ пăт çурă пыл илнĕ, çапла çара пĕтĕмпе 94 пăт ытла пыл туса илнĕ.

Сталин пурнăçĕ çинчен лекцисем

Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ 64 çул тултарнă май Улатăр хулинчи предприятисемпе учрежденисенче Сталин юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен лекцисем вуласа параççĕ. ВКП(б) хула комитечĕ организацилерĕ пĕр лекцие радио тăрăх вуласа панă.

Выльăхсем валли апат хатĕрлеме вĕренеççĕ

Сĕнтĕр районĕнчи Урпашри зоотехника участокĕнче выльăхсем валли сĕтеклĕ апатсем хатĕрлеме вĕренмелли кружок организациленĕ. Кружока зоотехник Трофимова юлташ ертсе пырать. Унта 19 çын вĕренет. Çавăн пек кружок нумай пулмасть Оринкнăри зоотехника участокĕнче те организациленĕ. Унта 17 çын вĕренет.

Вĕренӳре кирлĕ япаласем

Комсомольски районри Осипенко ячĕпе тăракан промартельте линейкăсемпе пеналсем тума пуçланă. Промартель туса кăларнă çав япаласене районри магазин 1.500 тенкĕлĕх сутнă та ĕнтĕ.

Çар ĕçне вĕренеççĕ

Калинино районĕнчи Юманайри вăтам шкулта Ворошилов пек тĕл пеме вĕренмелли, ПВХО тата ГСО кружокĕсем ĕçлеççĕ. Çав кружоксенче 120 ача вĕренет. Вĕсем çак кунсенчех вĕренӳ программине вĕçлеççĕ.

Донбасс ачисене тăванла пулăшу

Шупашкар районĕнчи „11 лет Октября" колхозри комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе Донбасри ачасене пулăшма укça пухасси саралса пырать. Ку таранччен пурĕ 75.000 тенкĕ сухнă.

Вĕренӳ отличникĕсене — наградăсем

Иртнĕ çулта ФЗО шкулĕсене вĕренме кайнă чухне Сĕнтĕр районĕнчи çамрăксем, отлично вĕренсе, пысăк квалификациллĕ рабочисем пулма сăмах паначчĕ. Халĕ вĕсенчен нумайĕшĕсем отлично вĕренеççĕ. ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен управленийĕ Астров, Яндушкина, Играевская тата ытти юлташсене пурĕ 11 çынна, хисеплĕ грамотăсем тата 300—400-шер тенкĕ укçа парса наградăланă.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕ Адриатика тинĕсĕн çыранĕ тăрăх малалла тапăнса пынă, çавăн пекех Американ 5-мĕш армийĕ те сăртсем çинче тĕллĕн-тĕллĕн малалла куçса пынă.

Ытти вырăнсенче икĕ фронтра та патрульсем çапăçнă.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ вăтаçĕр тата хĕвелтухăç Италири питĕ кирлĕ чугун çулсем çине бомбăсем пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Италин хĕвелтухăç çыранĕ хĕрринчи Риминине тата Çурçĕр Италири Феррарăна ăнăçлăн пырса тапăннă. Çапăçура тăшманăн 20 самолетне ытла персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин Адриатика тинĕсĕн çыранĕ тăрăх тапăнса пыракан 8-мĕш армийĕн чаçĕсем халь Ортонăран пĕр мильăна ытла çурçĕртерехре тăраççĕ.

1943 çулта Германи çине мĕн чухлĕ бомба пăрахнă

ЛОНДОН, декабрĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ 1943 çулта Германи çине 134 пин тонна бомба пăрахнă. Çакă вăл, 1942 çулхипе танлаштарсан, 4 хут ытларах шутланать. 1942 çулхи хĕллехи уйăхсенче, октябрьпе декабрьте, Германи çине бомбăсем 5.600 тонна пăрахнă. 1943 çулăн çав вăхăтĕнчех Германи çине бомбăсем 36.000 тоннăна çити пăрахнă.

Германи çине пăрахнă бомбăсен пĕтĕм йывăрăшĕ вăрçă пуçланнăранпа 200.000 тонна ытла шутланать. Çак хисепĕн çуррине ытла юлашки 7 уйăх хушшинче пăрахнă.

БЕРЛИН ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИН РЕЗУЛЬТАЧĔ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонтиднинген» хаçат çапла пĕлтерет: Англи самолечĕсем Берлина сентябрĕн 24-мĕшĕнче тапăннă чухне ăна уйрăмах хытă çĕмĕрнĕ. Хулари Дĕмĕнпур районсем сиен курнă. Декабрĕн 27-мĕшĕнче ирхине 20 гектара ытла лаптăк çинче пушарсем çаплах вăйлă пулнă. Пушарсене сӳнтерес тата урамсене çурт ишĕлчĕкĕсенчен тасатас тĕлĕшпе темиçе вунă пин çын ĕçлет.

США-н ТИНĔС-ÇАР ВĂЙĔ ӲСНИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс-çар ĕçĕсен министрĕ Нокс пичет представителĕсемпе калаçнă чухне çак çулта фронтра Американ вăрçă самолечĕсен хисепĕ виçĕ хут ӳсни çинчен каласа панă.

Америка флотĕнче, 1941 çулхи декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, авианосецсем халь ултă хут ытларах.

Çак юлашки çулта,—тенĕ малалла Нокс, — американецсем тăшманăн подводнăй лодкисене нихăçанхинчен нумай пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн подводнăй лодкисем сиен тума пултарасси вăрçă пуçланнăранпа нихăçан пулман пек каялла чакрĕ.

Хальхи вăхăтра Американ 4.000 сулу-иçу суднине хĕçпăшаллантарнă. Нумайĕшĕсем çине çӳлелле перекен тупăсем лартнă. Çав тупăсем иртнĕ çулсенче вăрçă карапĕсем çинче пулнă зенитнăй артиллерирен лайăхрах. Юлашки çулталăк хушшинче США флотĕнче çынсен хисепĕ 1.259 пинрен 2.388 пин çынна çити ӳсрĕ, тинĕс-çар флотĕнчи пулăшса тăракан хĕрарăмсен корпусĕ 5 пинрен 18 пин çынна çитрĕ. Иртнĕ çулта пур йышши суднасем те пĕтĕмпе 3.500 судно туса кăларнă.

ГЕРМАНИ ФЛОЧĔН ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин вăрçă пуçланнăранпа 42 эсминецпа торпеда катерĕнчен кая мар пĕтнĕ. Халь Бискай заливĕнче пулса иртнĕ операци Германин судоходствине сĕнĕрен вăйлăн пырса çапнă.

ГЕРМАНИН «ШАРНГОРСТ» ЯТЛĂ ЛИНКОРНЕ ПУТАРНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Швецин «Социал демократен» ятлă хаçачĕ «Шарнгорст» ятлă линкора путарни çинчен çапла çырать: çав линкора тинĕсе тухма Гитлер хăй приказ панă. Çакăн пек тунине Гитлер союзниксен караванĕн суднисене пĕтерсе тăкасшăн пулнă, ун хыççăн вара пысăк çĕнтерӳ тунă çинчен пĕлтересшĕн пулнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ЧĂВАШМЕЛЬТРЕСТА план отделĕн начальникĕ, статистик, бухгалтер-ревизор тата техник-строитель кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: ул. Урицкого, 15. Телефон 2—16. 3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1183 Типография №1, Управлени полиграфи. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.